К 84.09(=Чув)
А 90
Ч- 42887

Светлана Асамат

# АЛФАВИТ

Национальная библиотека ЧР
4-042887

Обязат. экз.
К 84.09(=Чув)
А 90

Светлана АСАМАТ

# А
# Л
# Ф
# АЛФАВИТ
# В
# И
# Т

кр

Шупашкар
"Çěнě Вăхăт"
2010

**Кĕнекене кăларма пулăшнăшăн**
**хаклă аттене,**
**ĕçпе вăрçă ветеранне,**
**Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав тата Аслă**
**Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степеньлĕ**
**орденĕсен кавалерне,**
**Василий Степанович Степанова,**
**вăрăм ĕмĕр сунса, пархатарлă кăмăлĕшĕн**
**чĕререн тав тăватăп.**

**Асамат С.В.**
**Алфавит.** – Шупашкар: “Çĕнĕ Вăхăт”, 2010. – 12 с.

ПРОВЕРЕНО
2016 1 ОКТ 2017

© Азамат С.В., 2010

И-42887

НАЦИОНАЛЬНАЯ ... ТЕКА

# САС ПАЛЛИСЕМ

## *Йĕкĕреш йĕркен*

**А***шшĕ-амăш куçĕнче –*
**А***чи-пăчи – пĕр тĕнче.*

**Ă***н – ăнкарма, ăнланма,*
**Ă***слăлăха ăнтăлма.*

**Б***ибли – пурнăç кĕнеки,*
**Б***укварь – пĕлӳ кĕреки.*

**В***итĕм кирлĕ вăхăтра*
**В***ĕткеленни вырăнсăр.*

**Г***ранит – çирĕп, чаплă чул,*
**Г***рафит – çемçе, хура чул.*

**Д***емократи саккунĕсем*
**Д***епутатсен шайĕнче...*

**Е***ртÿçĕсен йĕрĕ çине*
**Е***ткерçĕсем тухаççĕ.*

Ĕç-хĕл – ĕçчен палăкĕ,
Ĕрче, чăваш халăхĕ.

Ёлка тавра çаврăннă чух
«Ёштăр-ваштăр» пулкалать...

Журналистсем – сăмахпа
Жонглер евĕр выляççĕ.

Зефир – пылак çимĕç пур,
Зефир – мамăк пусма пур.

*Илес-милес çил-тăман*
*Ирпе каçа пăхăнмасть.*

*Йăнăш – йынăшса йăлăхтарать,*
*Йăпану – йăвашшăн йăлкăшать.*

*Карап тума пуçличчен*
*Кимĕ тума пуçланă.*

*Лайăх йăла-йĕркене*
*Ламран лама куçарас.*

Мăшăр аван пулсассăн
Мăшкăл курас хуйăх çук.

Нӳре кайнă çанталăка
Нухрат сĕнсе чараймăн.

Орфографи – тĕрĕс çырасси,
Орфоэпи – тĕрĕс пуплесси.

Пурлăх парса хăварма
Пуян ăс-хал пухмалла.

***Р**ехетленсе пулăшнăшăн*
***Р**ахмат сире, тус-тăван.*

***С**авăк тусĕ – сĕреплĕх,*
***С**ăвап тусĕ – сăпайлăх.*

***Ç**ывăх çынпа çапăçакан –*
***Ç**ылăх çатмин çунăкки.*

***Т**ĕнкĕлтетсе çӳрекен –*
***Т**улăх пурнăç тăвайман.*

*Утса, чупса кайиччен*
*Упаленме пуçлатпăр.*

*Ӳркенмесĕр ĕçлекен*
*Ӳнер ăсти пулатех.*

*Феноменла фантаст вĕсем –*
*Философпа филолог.*

*Хăват – хевте мăшăрĕ,*
*Хайлав – сăмах кăшăлĕ.*

**Ц***имбал – кĕсле майлăрах,*
**Ц***итра – тренчĕл шайлăрах.*

**Ч***унпа чĕре чирĕсене*
**Ч***иркӳ юрри чӳхетет.*

**Ш***ухăшлама – шухăш пур,*
**Ш***ĕкĕлчеме – чĕлхе пур.*

**Щ***етка пур – шăл тасатма,*
**Щ***етка – пушмак çутатма.*

Ыррăн-сыввăн пурнасчĕ,
Ытлăх-çитлĕх курасчĕ.

Этемлĕхе пуçарнă мăшăр:
Этем – Адам, Ева – Йăва.

Юр хытарнă шăнак çĕр
Юрла-юрла ăшăнать.

Ят вăл явап, манас мар,
Ята ярса пурнас мар.

Азамат Светлана Васильевна

# АЛФАВИТ

На чувашском языке

Издается в авторской редакции

Верстка *Н.П.Шутеевой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать 22.04.2010. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура TimesET. Физ.печ.л. 0,75.
Тираж 1000 экз. Заказ №152.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.

Ч-42887
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШ...
РЕСПУБЛ...

20-00

**Светлана Васильевна Смирнова-Асамат**

“Хуркайӑк ҫулӗ", "Ӑшӑ ҫил", "Сас", "Стихи под настроение", "В приоткрытую дверь", "Скакало Время...", "Радость", "Чӑтӑм", "Ҫумӑр ташши", "Тӗлӗнтермӗш тӗлӗк" кӗнекесем пичетлесе кӑларнӑ. Унӑн сӑвӑ ярӑмӗсем ҫирӗме яхӑн ушкӑнпа тухнӑ кӗнекесене кӗнӗ. С. Асамат "Йывӑр шухӑшсем", "Ҫӑварни", "Аслӑ Атӑлҫи Пӑлхар патшалӑхӗн тӑпри ҫӑмӑл пултӑр", "Тӑван ялӑмри "Кантӑр кӳлли" ҫӑлкуҫа асӑнса", "Ҫеҫпӗл Мишшипе калаҫни" поэмӑсен, "Чӑн сӑмахӑн суйи ҫук" публицистикӑпа автобиографиллӗ фарс, "К.В.Ивановӑн "Нарспи" поэма вӑрттӑнлӑхӗ" тӗпчев авторӗ.

Чӑваш Патшалӑх академи юрӑпа ташӑ ансамблӗ "Асамат юррисем", "Шурӑ ҫӗмӗрт ҫурӑлчӗ", "Ӗмӗрлетпӗр ӗмӗре" - С.Асамат сӑвӑланӑ-кӗвӗленӗ юрӑпа ташӑ сюитисене ӗҫ репертуарне йышӑнса Италире, Францире, Германире, Испанире, Бельгире, Голландире, Египтра кӑтартнӑ.

Хӑйӗн тата чӑваш поэчӗсен: Ҫ.Мишши, Н.Шупуҫҫынни, П.Хусанкай, П.Эйзин, Г.Айхи тата ытти сӑвӑҫсен сӑмахӗсемпе ҫӗр ытла эстрада юрри хывнӑ. Вӗсене – хӑй, паллӑ юрӑҫсем, пултарулӑх ушкӑнӗсем юрлаҫҫӗ. С.Асамат илемлетнӗ чӑваш халӑх юррисем ҫитмӗле яхӑн. Ленинградри Пӗтӗм Союзри "Мелодия" фирма заводӗнче "Светлана Асамат юрлать" пластинка тухнӑ.

Светлана Асамат – Чӑваш Республикин искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ, Ҫ.Мишши премийӗн, Ульяновскри "Эткер" ыркӑмӑллӑх фондчӗн И.Я.Яковлев ячӗллӗ премийӗн лауреачӗ. Ҫирӗм ҫул ытла “Чувашия” Патшалӑх телевиденийӗпе радиовещани компанийӗнче ӗҫленӗ. Хальхи вӑхӑтра Чӑваш наци музейӗн филиалӗнчи К.В.Иванов ячӗпе хисепленекен литература музейӗн заведующийӗнче вӑй хурать.